**Сентябрĕн 10-мĕшĕ – Танкистсен кунĕ**

# "Çичĕ класс вĕреннипех танкпа çӳресси пирки шутламанччĕ"

Çĕршыва хӳтĕлесси арçын тивĕçĕ теççĕ те, çав сумлă ĕçри йывăрлăхсемпе çухатусене тата çарти интереслĕ пурнăça салтак пăтти çисе курнă çын çеç туллин уçса пама пултарайрать. Çак тĕрĕслĕхе танкистсен професси кунĕ умĕн Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин фрончĕсенче Т-34 танк бронипе витĕнсе тăшман çине ыткăннă, нумай çапăçура ăна тĕппипе çапса аркатса çĕнтерĕве çывхартнă совет танкисчĕпе тĕл пулса калаçни тепĕр хут çирĕплетсе пачĕ. Салтак пурнăçĕ тата Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи танкист куçĕпе...

– 1941-1945 çулсенчи хаяр вăрçăра эпĕ Суворов, Кутузов хӳтĕленĕ Раççейшĕн çапăçрăм. Коммунистсен партинче тăманскер халĕ те "Пĕрлехи Раççей" тата Аграри партийĕсен никĕсĕсенчи шухăшсене çеç ырлатăп: Раççей-çке манăн кил! Ăна вара нимĕнпе те улăштарма çук, – паянхи çынсен тĕп шухăшне палăртса калаçать Ярославкăра пурăнакан 82 çулхи Иван Никитич Гришин танкист асилӳпе питри пĕркеленчĕксене туртăнтаркаласа. Асăрхăр-ха, ку сăмахсенче ветеран шухăшĕсенчи пуян пурнăç опычĕ палăрать мар-и? Çапла, çĕршыври коллективизаци утăмĕсем, фашистсен эшкерĕсене хирĕç вилĕме куçран пăхса çапăçни, Аслă Отечественнăй вăрçă хыççăн юхăннă çĕршыва ура çине тăратни, мирлĕ пурнăçа çултанçул малалла аталантарни витĕр тухни унăн сăн-питĕнче те, шухăшлавĕнче те манăçми тарăн йĕр хăварнă.

1924 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче çуралнă Иван Никитич Гришин çĕршывра совет самани ураланма пуçланă вăхăтра кун çути курнă. Йăлт çĕнĕлле, йăлт урăхла. Çемьере кĕçĕнни пулнипе пĕрлех 3



**Иван Никитич Гришинпа районти çар комиссарĕ А.Н. Малинин (иккĕшĕ те танкистсем) Танкистсен кунĕ умĕн тивĕçлĕ çар службинче е контрактлă службăра танк çарĕсенче службăра тăнă тата халĕ районта пурăнакан пур арçынсене те танкистсен професси уявĕпе саламлаççĕ. Вĕсем мирлĕ ĕçре те хăйсен ятне ямасса шанаççĕ.**

çултах ашшĕсĕр тăрса юлать вăл. Çапах та çĕнĕ пурнăç ачи социаллă пурнăçăн тĕпсĕр авăрне путмасть: çул çитсен тантăшĕсемпе пĕрле шкула каять, çити-çитми пурнăçпах 7 класс пĕтерет, колхозра тырă акма-вырма кӳлĕнет. Пурăнмалла, тăван яла çĕклемелле, анчах... Тĕнчере иккĕмĕш тĕнче вăрçи вăй илме пуçланă вăхăт. Никамăн та чĕри вырăнта мар. Сывлăшра вăрçă шăрши... 1940 çул вĕçĕнче ку тăрăхран 7 ачана ФЗО шкулне вĕренме кайма ят тухать. Çийĕнчех мар пулин те, кăшт вăхăтран ял çыннисем, тăвансем ялтан хире тухса куççуль юхтарсах 16-17 çулхи яшсене инçе çула пĕлӳ илме ăсатаççĕ. Кам шутланă-ха уйрăлу пĕрисемшĕн вăрăма, теприсемшĕн ĕмĕрлĕхе пуласси çинчен. Анчах ăсатакансен те, инçе çула тухакансен те чунĕсем ырă марра сиснĕ пулас çав: кашнийĕнех куççенчен тулли куççульсем юхаççĕ, чĕре касса ыратать...

...Вăхăт çитсен Чăваш Енрен ФЗО шкулне вĕренме каякан çамрăксемпе тулнă икĕ эшелон Хĕвел Тухăçнелле хускалать. Урамра çу кунĕсем, чукун çул хĕррипе çил çинче чӳхенекен чечексем ӳсеççĕ, таврара кайăксен илемлĕ юрри-кĕвви, вагонсенче яшсен шӳтлĕ калаçăвĕ... Усал хыпар утпа çӳрет: Амур çинчи Комсомольск хулине çитесси пĕр кун юлсан эшелонсенчи çамрăксене Германи вăрçă пуçарни çинчен пĕлтереççĕ. Çак хыпар тин çеç пурнăç çулĕ çине тухакан çамрăксене епле хăрушла пырса çапни манпа калаçса ларакан Иван Никитич Гришин ветеран-танкист асĕнче паян та упранать. "Поезд çинче пире вăрçă пуçланни çинчен пĕлтерсен, эпир пĕр саслăн тенĕ пек макăрма пуçларăмăр. Эпĕ те куççуль юхтарман мар. Макăрнипе пĕрлех нумай ачасем поезд çинчен анса киле тесе тарма пуçларĕç. Эпĕ куççуль витĕр пулин те, тармастăпах тесе сăмах патăм: мĕн пулмалли унта-и е кунта – çав-çавах пулать, терĕм. Пире çулпа илсе пыракан салтаксем кĕçех таракансене пуçтарса вагонсене хупрĕç те вырăна çитиччен те тула тек кăлармарĕç. Хулара эпĕ электромонтерсем вĕрентекен ушкăна лекрĕм. Кунпа пĕрлех ялта кĕрепле тытса тата çум çумласа çеç курнăскерсем завод тунă çĕре лекрĕмĕр. Конструкцисене йăлт тимĕртен тума тиветчĕ. Тимĕр пăрăхсене тайгаран илсе килнĕ вутăран чĕртнĕ кăвайтсенче хăйăр тултарса хĕртеттĕмĕр те аваттăмăр, пĕчĕкшеррĕн завод çĕклеттĕмĕр. Пирĕн бригадир нимĕçчĕ те, калаçнă чухне, эпĕ нимĕç пулсан та вĕсем майлă мар, тени паян та асра",– 65 çул каяллахи асилĕве пуçларĕ ветеран. Çапла ĕçленĕ те вĕреннĕ вăл çулсенчи çамрăксем, партта хушшине ларасси пулман.

**(Вĕçĕ çитес номерте).**

**А. БЕЛОВ.**
**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

**Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ**

# Ачана шкула ăсатма мĕн хак ларать?

Черетлĕ вĕренӳ çулĕ, шкул партисем хушшине йыхравласа, алăкран шаккарĕ. Ашшĕ-амăшĕсемшĕн каллех шкул тумĕ туянмалли канăçсăр вăхăт çитрĕ. Лавкка, пасар сентрисем çинче шкула кайма кирлĕ хатĕрсем лăк туллиех, суйла кăна, укçуна çеç ан шелле. Паянхи кун Муркашра анчах уçăлнă пасар шкул хатĕрĕсене сутассипе лайăх ĕçлесе пырать. Унта пулса курнисем пĕлеççĕ, кирлине кунта туянма меллĕрех, хакĕ те йӳнĕрех, çĕнĕ тавар та ытларах. Çакă чылай илекенсемшĕн татах та аванрах.

Ачана пĕрремĕш класа парта хушшине лартма мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ каять-ши? Хаксемпе тĕплĕнрех паллашма эпĕ шăпах çак шкул ярмăрккине тухса пăхрăм.

Чи малтан ачана портфель кирлĕ, вăл вăтамран 370 тенкĕ тăрать. Ăна тултарма ручка, кăранташ, кĕнеке-тетрадь хуплашкисем, тетрадьсемпе дневник (кусем вара эпир вĕреннĕ чухнехи пеккисем мар) кирлĕ. Вĕсен хуплашкисене тĕрлĕ сăн ӳкерчĕксемпе илемлетнĕ, "5" паллă илме хавхалантараççĕ тейĕн. Кунтах тĕрлĕ сăрăсем, ытти кирлĕ вак-тĕвек. Çапла вара пĕрремĕш класа каякан ача портфельне 600 тенкĕлĕх таварпа тултартăм, çырса пынă тăрăх.

Халĕ ачан çипуçне хаклар. Костюм 500 тенкĕ, туфли – 400, шурă кĕпе – 50, спорт тумĕ – 700 тата ытти те. Пĕтĕмĕшле 2 пине яхăн ларчĕ эпĕ пăхнă тумтир. Кун çумне портфель тата унăн ăшĕнчи тавар хакне хушсан, эпĕ шутланă тăрăх, 2400 тенкĕне çитрĕ. Кусем вăтам хаксем пулчĕç. Тен, хăшĕ чаплăраххине илес тет, унăн хакĕ вара кăштах хăпарĕ.

Шкул тумĕн сентри умĕнче пĕчĕк арçын ачапа амăшĕ тертленеççĕ. Тен, унăн шкула каймалла? Эпĕ сăмах ваклама, хам пăхнă хаксене танлаштарма вĕсем патнелле утрăм.

– Сирĕн шкула каймалла пулĕ-ха?

– Çĕнĕ вĕренӳ çулĕччен шутлă кунсем çеç юлчĕç. Кĕçĕн ывăлăн пĕрремĕш класа каймалла, çавăнпа та тумтир шыратпăр. Ак çак костюма илсен, пĕтĕмпе туянни 3 пине яхăн ларать.

Çапла, ачана пĕрремĕш класа ăсатма сахалах мар укçа-тенкĕ кирлĕ. Енчен те çемьере виççĕшне шкул тенкелĕ çине лартмалла пулсан, ашшĕ-амăшĕн самай шутламалла пулĕ. **Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

**"Шкул ярмăрккине" пĕтĕмлетсе**

# Пуçламăшĕ лайăх

Ылтăн кĕркуннен пирвайхи кунĕ – чи илемлĕ те телейлĕ уяв: çак кун ачасем çĕнĕрен партăсем хушшине ларчĕç. Ашшĕ-амăшĕшĕн ачисене шкула пуçтарса ярас пĕр пысăк ĕç хыçра ĕнтĕ. Шкулта кирлĕ хатĕрсене, тумтире вĕсем вырăнтах туянма пултарччăр тесе район администрацийĕ пуçарнипе шкул ярмăркки "Моргаушавтотехсервис" территоринче ĕçлерĕ. Сутакансем валли те условисем тăвас тĕллевпе район администрацийĕ тунă тепĕр утăм – вырăн укçине шкул ярмăркки вăхăтĕнче чакарни те тавар туянакан майлах пулчĕ. Мĕншĕн тесен кунта тавар суйламалăх, чăннипех те, май пулчĕ-тĕк пулчĕ. Шупашкартан, ытти районсенчен предпринимательсем юлашки эрне кунсенче 100шер ытла çын килчĕ.

– Тавар та лайăх каять, -теççĕ вĕсем.

Районти культура ĕçченĕсем юлашки çулсенче кирек епле мероприятисенче те – спорт ăмăртăвĕ е шкул ярмăркки – уява уяв сĕмĕ кĕртеççĕ. Икĕ эрнере çĕн пасарăн сцени çинче Муркашри "Расна" эстрадăпа фольклор ушкăнĕ, Мăн Сĕнтĕрти "Янаш", Москакассинчи "Шуçăм" халăх коллективĕсем, Турайри Культура çурчĕ çумĕнчи тата Муркаш райповĕн эстрада ушкăнĕсем хăйсен пултарулăхĕпе савăнтарчĕç.

Пуçламăшĕ мĕнле, малашĕ те çапла, теççĕ. Çĕнĕ пасар ярмăркка шавĕпе тулни вара унăн малашлăхĕ пирки те шанăç парать. Вырăнти предпринимательсем мĕн шутлаççĕ-ши кун пирки? **Л. ПАВЛОВА.**

**Операци**

## «Асăрханăр – ачасем!»

Хальхи вăхăтра ачасем çул-йĕр çинче инкеке лекнĕ тĕслĕхсем сахал мар. 2006 çулхи 7 уйăхра кăна кун пек тĕслĕхсем 3 пулнă. Çавна май çулсем çинче ачасем хутшăннипе пулакан инкексене асăрхаттарас тата ачасене вĕреннĕ çĕре автомобиль транспорчĕпе илсе çӳреме хăрушсăр майсем туса парас тĕллевпе 206 çулхи августăн 20-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 10-мĕшĕччен «Асăрханăр – ачасем!» операци ирттерме йышăннă. Ăна районти шалти ĕçсен подразделенийĕсем район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕпе пĕрле ирттереççĕ.

## «Автобус»

Кăçалхи январь–июль уйăхĕсенче çул-йĕр çинчи инкексенче автобуссен водителĕсем хутшăннипе 3 инкек пулнă, вĕсенче 2 çын вилнĕ тата 7 çын аманнă. Водительсен айăпĕпе 1 инкек пулнă, унта 1 çын аманнă.

Инкексен тĕп сăлтавĕ – юридици вăйĕнчи çынсемпе уйрăм предпринимательсем нормативлă право акчĕсен требованийĕсене пурнăçламанни. Кунсăр пуçне автобуссен 50 процентчĕпе амортизаци срокĕ тухнă пулин те усă кураççĕ.

Ытларах укçа илес тесе автобуссенче салонра пассажирсем валли ларма хушма вырăнсем тăваççĕ, топливо бакĕсем вырнаçтараççĕ, çывăрмалли вырăнсем йĕркелеççĕ. Кунпа пĕрлех автобуссене палăртнинчен ытларах пассажирсем лартни, водительсемпе инструктажсем ирттерменни, çул-йĕр условийĕсем тивĕçтерменни те инкексем патне илсе пырать.

Транспорт хатĕрĕсене пăхса тăрассипе, юсассипе, водительсене медицина тĕрĕслевĕ тăратассипе тĕрлĕ организацисемпе ултавлă килĕшӳсем тунă тĕслĕхсем пур. Предприятисен производствăпа техника бази кирлĕ требованисене тивĕçтермест.

Çавна май çулсем çинче пассажирсене илсе çӳренĕ çĕрте инкексем пуласси не асăрхаттарас тĕллевпе «Автобус» операци ирттереççĕ. Вăл 2 тапхăрпа иртет: 1-мĕш тапхăр – августăн 21-мĕшĕнчен тытăнса сентябрĕн 3-мĕшĕччен тата 2-мĕш тапхăр сентябрĕн 18-мĕшĕнчен тытăнса октябрĕн 1-мĕшĕччен.

Операци вăхăтĕнче автобус водителĕсем çул-йĕр правилисене, пассажирсене, шкул ачисене вĕреннĕ вырăнсене илсе çӳремелли правилăсене мĕнле пăхăнни çине пысăк тимлĕх уйăраççĕ.

**С. ИВАНОВ,**
**районти шалти ĕçсен пайĕн патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн пропаганда инспекторĕ.**

**Спорт**

# Иккĕмĕш вырăна тухнă

Иртнĕ вырсарни кун, августăн 27-мĕшĕнче, Шупашкар хулинче хăвăрт утассипе Раççей кубокне çĕнсе илессишĕн ăмăртусем иртнĕ. В. Егорова ячĕпе хисепленекен ачасемпе çамрăксен Олимп резервĕсен спорт шкулĕн воспитанникĕ Нина Охотникова (тренерĕ И.В. Смирнов) дистанцире ăнăçуллă пулнă. Хĕрсен ушкăнĕнче 5 километра ăмăртса вăл финиша иккĕмĕш çитме пултарнă. Малашне те ăнăçусем сунар пултарулла спортсменкăна.

Моргаушский районный Совет РОСТО (ДОСААФ) выражает глубокое соболезнование родным и близким по поводу смерти бывшего председателя районного комитета ДОСААФ

**КРОЛЬКОВА**
**Геннадия Анатольевича.**

Районти шалти ĕçсен пайĕн коллективĕ шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн кадрсен енĕпе ĕçлекен çумĕн Л.В. Кролькован мăшăрĕ, çул çитмен çамрăксем енĕпе ĕçлекен инспекторăн М.А. Конузинан пиччĕшĕ

**Геннадий Анатольевич**
**КРОЛЬКОВ**

вăхăтсăр вилсе кайнă пирки вĕсен çемйипе тата çывăх тăванĕсемпе пĕрле чĕререн хурланса пĕлтерет.

**Пĕлтерӳсем. Объявления**




**Продается дом деревянный 11х6,5 м., жилая площадь 65 кв. м., крыша оцинкованная, газовый котел, трубы, газовая плита, водяное отопление, трубы диаметром 76 мм на вывоз.**
**Адрес: д. Москакасы, ул. Московская, д. 30.**
**Тел.: 8-906-383-86-10, (241)34-3-10. 3-3.**

**Ĕлĕкхи укçа, кĕнекесем, открыткăсем, статуэткăсем тата кивĕ япаласем туянатăп.**
**Тел.: 8-927-854-29-97. 2-5.**

**8 сентября в РДК Ульяновская обувная фабрика проводит расширенную продажу обуви из натуральной кожи.**

**Моргаушскому райпо требуются на постоянную работу грузчики.**

**МУП ЖКХ «Моргаушское» срочно требуются водители, сантехники, газоэлектросварщики. Обращаться по телефону: 2-13-74.**

ГУП ЧР "Моргаушский издательский дом"
Моргаушская районная газета
"ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики "Моргаушский издательский дом".
Директор-главный редактор
А.И. ТИХОНОВ.

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,5 п. листа. Тираж 3334.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану çулĕпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 01.09.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру Р. ИЛЛАРИОНОВА.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП "Моргаушский издательский дом", отпечатан (вкладыши - в ГУП "Моргаушский издательский дом") в типографии ГУП "ИПК "Чувашия": 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.